ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

45 (4459) №, 2015, ноябрь, чӳк, 5
(1931 çулхи январĕн, кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ХАСТАРСЕМ

## Ашшĕ-амăшĕ епле, ачи-пăчи те çапла



Тăваттăмĕшĕнчи Верония, çиччĕмĕшĕнчи Стас тата вун пĕрмĕшĕнчи Таня Андюковсем – йышлă çемьерен. Пурте тăрăшуллă. Вĕренӳре те, обществăлла ĕçсенче те.

– Кăçал шкултан вĕренсе тухатăп, юрист профессине алла илес ĕмĕт пур-ха, – палăртрĕ хăй шухăшне вĕренӳре «5» паллăпа çеç ĕлкĕрсе пыракан Таня.

Вăл пуриншĕн те тĕслĕх вырăнĕнче. Педагогсем те унăн сатурлăхĕнчен тĕлĕнсе пĕтерейместĕ.

– Шкултан ылтăн медальпе вĕренсе тухма хатĕрленекен çамрăкăн малашлăх сукмакĕ те тумхахсăр пултăрччĕ, мĕн ĕмĕтленни пурнăçа кĕтĕрччĕ, – тесе ырă сунать кашниех.

Сăвă-калав çырма кăмăллакан Таня паян та алла ручка тытать. Ĕçĕсене редакцие ярса парас шухăш та пĕрре мар пулнă, анчах сăпайлăскер хăй ĕмĕтне самантрах сирсе янă. «Хаçат страницисене вырнаçма «пиçсе» çитеймен пуль çав манăн материалсем», – тетеленĕ. Юрă çырма ăстаскер гитара калать. Çав вăхăтрах олимпиадăсене хутшăнса та палăрать, тĕлĕнмелле хитре ӳкерет.

– Эпир аппапа мăнаçланатпăр, ун пек пулма тăрăшатпăр, – теççĕ Стаспа Верония. – Вăл пире вĕренӳри йывăрлăхсене парăнтарма пулăшать. Кил-тĕрĕшри ĕçсене те пĕрле пурнăçлатпăр авă. Апат пĕçеретпĕр, тусан шăлатпăр, урай, кашăк-чашăк çăватпăр. Пиллĕкри Валера шăллăм, виççĕри йĕкĕреш Ольăпа Галя йăмăкăмсем те пирĕн тавраллах чупкалаççĕ вара. Мĕнпе те пулин пулăшасшăн ăшталанаççĕ. Валера çав вăхăтрах хăй епле вулама пĕлнине кăтартасшăн кĕнекине йăтса чупать. Вăл вырăсла-чăвашла çеç мар, акăлчанла сас паллисене те паллать. Ытларах унпа анне ларать. Йăмăкăмсем вара теттесемпе выляма кăмăлласçĕ. Туслă пурăнатпăр.

Пĕр тăвансен ашшĕпе амăшĕ те, Андрей Валерьевичпа Лариса Геннадьевна, йышлă çемьерен. Ашшĕсем авă вуннăн. Тăванĕсем ытларахăшĕ ялта тĕпленнĕ.

– Кирек епле ĕçре те пĕрле эпир. Выльăх-чĕрлĕх чылай усратпăр та, утă-улăмне хатĕрленĕ чухне йышпа тăрăшатпăр. Асанне те кашни тĕпренчĕкĕшĕн тăрăшать, мĕнпе те пулин пулăшма ăнтăлать, – теççĕ Андюковсем.

...Тăваттăмĕшĕнчи Верония, çиччĕмĕшĕнчи Стас, вун пĕрмĕшĕнчи Таня пирки те мĕнпур ыррине çеç калаççĕ вĕрентекенсем. «Тĕлĕнмелле çемье, хĕрачисем çеç мар, арçын ачисем те çав тери ĕçчен, сăпайлă. Вĕсенчен ăшăлăх тапса тăрать, мăнкăмăллăх тени çук. Хастар ачасемшĕн ашшĕ-амăшне тав. Кирлĕ пек воспитани параççĕ», – тесе çирĕплетеççĕ.

*Элиза ВАЛАНС.*

Канаш районĕ,
Чакаç.

**АВТОР сăнӳкерчĕкĕнче:** Андюковсем иккĕмĕш сыпăкри тăванĕсемпе.

ÇЫРĂНТАРУ – 2016

**Вăхăт шав малаллах шăвать.**

**«Тантăш» хаçатпа «Тетте», «Самант» журналсене çырăнмалли тапхăр пырать. Эсир çак кунсенче вĕсене çырăнмасан, кайран кулянмалла ан пултăрччĕ. Васкăр! Çырăнса илĕр! Хăвăр çырăнăр та тусăрсемпе кӳршĕсене те кун пирки калăр. Вĕсем те çак кăларăмсемсĕр ан юлччăр!**

**Хакĕсем: «Тантăш» – 266,70 тенкĕ,**
**«Тетте» – 148,98 тенкĕ,**
**«Самант» – 187,26 тенкĕ.**

## Тăванăм, чăваш!



Эсĕ "ХЫПАР" çырăнма манман-и?

"Хыпар" – 625,62 тенкĕ,
"Хыпар"-ӗрне кун – 325,92 тенкĕ

# Кашнинех кӳрет хăват «Тантăшпа» «Тетте», «Самант»





«Хăй вăхăтěнче «Пионер сасси» хаçата кăмăлласа вуланă, çавăнпа почтальон килнине курсан хирěç чупни те пěрре мар пулнă. Юратнă кăларăм пире вěренӳре хавхалантаратчě. Хастар ачасем пирки вуласа пěлсен чунра ырăлăх хуçаланатчě, çав çамрăксем пек пулма тăрăшса ырă ěçсемпе савăнтараттăмăр. Спортра çитěнӳ, вěренӳре ӳсěмсем тума та пулăшатчě хаçат», – терěç Елчěк районěнчи Çирěклě Шăхаль шкулěн вěрентекенěсем.

Паян вара «Тантăш» хаçата çырăнас тěллевпе те палăртрě хастар коллектив. «Республикăри çěнě ăрупа паллашсах тăмалла пирěн», – терěç.

Çěрпӳ районěнчи Патăрьел шкулěн вěренекенěсем: Даша Гурьева, Катя Семенова, Даниил Гурьев, Вова Ельмаков, Надя Павлова – чи хастаррисем. Вěренӳре çеç мар, спортра та пěрре мар çитěнӳ туса шкул ятне çӳлте тытнă.

Вова самбо, дзюдо секцийěсене кăмăлпа çӳрет. Хастарлăхне пула республикăра иртекен ăмăртусене хутшăнса çěнтерӳçě ята пěрре мар тивěçнě.

Катьăпа Даниил шашка-шахматла выляса республикăра палăрнă. Надьăна авă "Зарница" командирě пулма та шаннă педагогсемпе пěрле вěренекенсем. Даша пулас спортсмен, пěр ăмăртуран та юлмасть. Палăртнă тěллевне яланах пурнăçа кěртет.

– Эпир туслă пурăнатпăр, çавăнпа та «Тантăш» хаçатпа та çырăнса илетпěр. Унта интересли, кăсăкли пире валли тем чухлех, – теççě Патăрьел шкулěн хастар вěренекенěсем.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*

---

*«Çырăнтару – 2016» кампани малалла пырать. «Тантăш» хаçатпа «Тетте», «Самант» журналсене чылай шкул ачи хаваспах çырăнать. Учительсем те вěренекенсене ырă тěслěх кăтартаççě. «Тăван шкула – парне» акцие хутшăнса Елчěк районěнчи Патреккел шкулěнчен 1968 çулта вěренсе тухнă Геннадий Петрович Егоров çакăнта халě пěлӳ илекенсене «Тантăш», «Тетте» çырăнса пачě. Измаил Михайлович Григорьев полковник Красноармейски районěнчи пěр шкула парне турě. Улька Эльмен çыравçă Вăрнар районěнчи шкулсемпе ача сачěсене 23 экземпляр «Тантăш» тата çавăн чухлех «Тетте» çырăнса пама кăмăл турě.*

---

## Çыхăну пулě малашне те

*Эпир В.В.Андреев ячěллě вăтам шкулта тăваттăмěш класра вěренетпěр. «Тантăш» хаçата юратса вулатпăр. «Тетте» журнала та çитес çулăн çур çулě валли кашни çырăнса илме хамăр ума тěллев лартрăмăр. Интереслě кăларăмсем вěсем.*

*Пěррехинче чăваш чěлхи урокěнче пире вěрентекен «Тантăш» хаçат валли заметка çырма хăнăхтарасси пирки сăмахларě. Эпир хаваспах килěшрěмěр. Тăрăшсах ěçе пикентěмěр. Тархасшăн, пирěн ěçсене пăхса тухсамăр. Килěшрě пулсан – пичетлěр.*

***4-мěш класс вěренекенěсем.***

**РЕДАКЦИРЕН:** Хаклă тусăмăрсем! Сирěн пирěнпе çыхăну тытма тěллев пурри питех те савăнтарчě. Эсир «Тантăш» хаçата юратса вуланине, ăна çитес çул валли кашни çырăнса илме ěмěтленнине те ырламалла çеç. Маттурсем! «Тетте» журнал та сирěн юратнă кăларăм. Вăл та класра кашнин пуласса шанатпăр. Заметкăсем аван. Пěрремěш утăм тӳрех çирěп пулмасть. Çавăнпа та сирěн çырас ăсталăх малашне ӳссе пырасса кěтсех тăратпăр.

## Туслăхпа хисеп — малта

Пирěн çемье пысăк. Эпир, аттепе анне, пиччепе аппа тата эпě, килěштерсе те пěр сăмахран тенě пек пурăнатпăр. Аппапа пичче хулара ěçлеççě. Яла канмалли кунсенче килеççě. Анне килте кăштăртатать, пире валли тутлă апат пěçерет, вылăх-чěрлěх пăхать. Атте стройкăра тăрăшать. Эпě вара шкулта вěренетěп.

Чи кирли – эпир туслă пурăнатпăр. Пěрпěрне яланах пулăшатпăр. Хисеплени вара яланах малта. Кӳрентерместпěр. Туслă пурăннине нимěн те çитмест.

Хамăн туслă çемьене питě юрататăп.

*Виктория АБДУЛКИНА.*

## Чи хаклă çын

Манăн анне, Вера Васильевна, шкулта учитель пулса ěçлет. Вăл ачасене информатика тата математика предмечěсене вěрентет. Унăн ěçě пěрре те çăмăл мар. Пире шутлама хăнăхтарасси, аслăрах классенчи ачасене хальхи информатика тěнчинче тěрěс утма вěрентесси пěрре те ансат мар. Кашни вěренекен шутлав вăрттăнлăхěсене алла илтěр тесе нумай тăрăшать.

Анне çěр çинчи чи ырă та лайăх çын. Унăн илемлě те ăшă кулли хěвел пек туйăнать. Вăл тěрлěрен тутлă та техěмлě апат пěçерме юратать. Пушă вăхăтра кěнеке вулать. Мана та уроксем хатěрленě вăхăтра пулăшать. Аннене юрататăп. Ун пекех маттур пулма ěмěтленетěп.

*Ксения ПАВЛОВА.*

### Писук

Пур ман тус-юлташ Писук,
Унран лайăххи çук!
Пěрмаях унпа вылятăп,
«Тантăш» вулама калатăп.

### Тăван ял

Юрататăп тăван ялăма,
Вăл ялан йыхăрать ытама.
Маншăн ун илемли, чи хитри.
Тăван ялăм, аван эс пурри!

### Юлташ

Лайăх юлташ Руфина,
Кăмăллатăп эп ăна.
Юратать вăл ěçлеме,
Шкулта лайăх вěренме.

### Кěркунне

Çитрěç ав кěрхи кунсем,
Йывăççем çаралнă.
Вěçсе кайрěç кайăксем,
Çу ăшши сухалнă.

*Настя ДМИТРИЕВА.*

### Çумăр

Ир-ирех çумăр çăвать,
Çумăр савăнать.
Курăксем симěсленеççě,
Чечексем те çитěнеççě.

*Виктория ДОБРОХОТОВА.*

### Хěлле

Тăтăм эпě çывăрса,
Пăхрăм кантăкран,
Куртăм кӳршě хурăна –
Шап-шурă тумпалан.
Куртăм шурă мулкача –
Сиксе çӳрет пахчара.
Питě килěшрě мана:
Шур хěлле йěри-тавра.

*Катя ТРОФИМОВА.*

Елчěк районě,
Лаш Таяпа шкулě.

**Вěреннě çын вěренерен те хурама тăвě.**

Тантăш
чăваш ачисен хаçачě

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчě» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийě.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĚ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашěнче.

● Редакципе издатель адресě:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчě" АУ техника центрěнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" ПУП типографийěнче пичетленě.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĚ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĚП РЕДАКТОРШĂН
М.М.АРЛАНОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тěп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ěçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайě: 28-85-69
спорт тата экологи пайě: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайě: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1299 экз.

● ЗАКАЗ
№ 4275
Пичете чӳк уйăхěн 3-мěшěнче алă пуснă.

● ПИРĚН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалěсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

## «Пирĕн вăхăтри ПАТТĂРСЕМ»




Чăваш Республикин Культура министерстви тата Ача-пăчапа çамрăксен библиотеки кĕркуннехи «Çамрăксем сывă пурнăç йĕркишĕн» республика акцийĕпе килĕшӳллĕн «Пирĕн вăхăтри паттăрсем» электрон презентацийĕсен конкурсне йĕркелет.

Конкурс тĕллевĕ: ачасемпе çамрăксен хушшинче сывă пурнăç йĕркине анлăн сарасси, усал йăласенчен асăрханма хăнăхтарасси. Сывă пурнăçа пăхăнакан, тулли те интереслĕ пурнăçпа пурăнакан пĕр-пĕр çынна тĕслĕх выранне хурса ачасене хавхалантарасси.

Конкурс октябрĕн 23-мĕшĕнчен пуçласа ноябрĕн 20-мĕшĕччен пырать. Унта 7-11 классенче, гимназире, лицейра, хушма пĕлӳ паракан учреждениесенче вĕренекенсем; училищĕре, техникумра тата колледжра 1-мĕш курсра ăс пухакансем хутшăнма пултараççĕ.

Конкурса тăратнă ĕçсем палăртнă темăпа, унăн тĕллевĕпе килĕшӳллĕ пулмалла, кăмăл-туйăм тĕлĕшĕнчен тĕрĕс витĕм кӳмелле. Презентацире усă курмалли материал /фотоматериал, ӳкерчĕк, кашни слайдра – текст/ паха пулмалла. Унсăр пуçне вăл хăйне евĕрлĕхпе, илемлĕхпе уйрăлса тăмалла.

Электрон презентацие Microsoft Power Point программăра хатĕрлемелле, слайдсен шучĕ 12-рен ытла пулмалла мар, пĕрне презентаци ячĕпе автор пирки çырнă информаци вырнаçтармалла.

Заявкăсене Ача-пăча библиотекинчи Вулав залĕнче йышăнаççĕ. Унсăр пуçне почтăпа çак адреспа 428027, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, д. 8, детско-юношеская библиотека е kmc@chuvrdud.ru электрон адреспа ярса пама юрать.

Çĕнтерӳçĕсене ноябрĕн 20-мĕшĕнче 14 сехетре библиотекăра чысласçĕ.

**Ыйтса пĕлмелли телефонсем:** 8/835/ 52-37-22; 51-62-63; 8-919-660-94-43.

СТИПЕНДИАТ

# Спортра та, пурнăçра та малта



«Тĕллеве пурнăçлас тесен чăтăмлăхпа тăрăшулăх кирлĕ», – тет вунпĕрмĕш класра вĕренекен Аня Гаврилова сăпайлăн. Шкул чысне ăмăртусенче, конкурс-олимпиадăра хӳтĕлесе çӳле çĕклекенсkер кăçал ЧР Пуçлăхĕн стипендиатки пулса тăнă. Çак çăмăллăха тĕрлĕ çĕрте пысăк çитĕнӳсемпе палăрнă çамрăксем çеç тивĕçеççĕ. Аня вара пур çĕрте хастар.

Кĕнеке-журнал вулама кăмăллакансkер сăвăсем çырма ăста, çак енĕпе тĕрлĕ конкурса та хутшăнмасăр юлмасть. Ăслăлăх конференцийĕсемпе тĕпчев ĕçĕсенче те вăл çивĕч ăсĕпе палăрать. Унăн пултарулăхĕ иксĕлми.

– Аня пирĕн шкул чысĕ те мăнаçлăхĕ. Питĕ тăрăшуллă вăл. Кашни урока тĕплĕн хатĕрленсе килет, общесввăллă ĕçсенче те хастар, – мухтаççĕ стипендиаткăна вĕрентекенсем.

Маттурсkер хăйне тĕрлĕ çĕрте тĕрĕслесе пăхма шут тытнă тейĕн. Ара, вăл спортпа та туслă-çке, унта курăмлă çитĕнӳсем тума ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ. Çиччĕмĕш класран пуçласа кире пуканĕ йăтассипе, каярахпа армспортпа кăсăкланма тытăннă. Паянхи кун Аня – армспорт енĕпе ЧР тата Атăлçи федераллă округĕн чемпионĕ. Чылай ăмăртăва хутшăнса ăсталăхне çирĕплетсе панă вăл.

Кашни спортсменăн пурнăçра пĕлтерĕшлĕ, асра юлмалли тупăшу пурах. Аньăшăн вара кăçал Болгарире армреслинг енĕпе иртнĕ Европа Чемпионачĕ пулнă. Унтан вăл сулахай аллипе вăй виççе 2-мĕш, сылтăммипе – 3-мĕш вырăнсене тивĕçнĕ. Тăван ене икĕ медальпе тата дипломпа таврăннă. Ку чăнах та пысăк çитĕнӳ!

Çамрăк спортсменка мĕншĕн хĕрачасемшĕн хăйне евĕрлĕ çак спорт тĕсне суйласа илни питех те интереслентерчĕ. Кире пуканĕ йăтассипе кăсăкланакансkере пĕррехинче алă вăйĕ виçессипе район ăмăртăвне ярăççĕ те унтан вăл çĕнтерӳпе таврăнать. Хавхалану çунатлантарни те, армспорт кăмăла кайнине туйса илни те хăйне çак спорт тĕсĕпе туслашма хистенине хăпартланса аса илет пике. Малтанхи вăхăтра ятарлă тренер пулмасан та тупăшусене пурнĕрех пĕр сиктермесĕр çӳренĕ. Халĕ вăл каникулсемпе канмалли кунсенче Шупашкарта Алексей Леонидович Атласкин тренер патĕнче maçтăрлăхне ӳстерет.

Хĕр-упраç çакăн пек тăрăшуллă пулнинче ашшĕпе амăшĕн тӳпи пысăк. Шăпах вĕсенчен Аня тĕслĕх илет те ĕнтĕ. Çывăх çыннисен хавхалантаракан сăмахĕсем, сĕнӳ-канашпа пулăшни нимрен паха уншăн. Ку вара спортра çеç мар, пурнăçра та çĕнтерӳçĕ пулма çунатлантарать.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

Елчĕк районĕ,
Елчĕк шкулĕ.

СПОРТ

# Çамрăк кĕрешӳçĕн черетлĕ çитĕнĕвĕ

Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строительне, Красноармейски районĕн хисеплĕ гражданине Анатолий Иванович Слукина асăнса ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен турнирĕ иртрĕ. Ку спорт ăмăртăвне Хĕрлĕ Чутай спортсменĕсем те хастар хутшăннă.

2007-2009 çулсенче çуралнă, 28 килограма çитиччен пăхаттир арçын ачасем хушшинче Хĕрлĕ Чутай шкулĕнче 2 «в» класра вĕренекен Вадим Иванов кĕмĕл çĕнсе илме пултарнă. Вадим призер пулнă май ăмăртура Диплома, медале тата кубока тивĕçнĕ.

Сăмах май, Вадим ача садĕнченех спортпа туслă. Вăл питĕ тăрăшуллă, шкулта лайăх паллăсемпе ĕлкĕрсе пырать, йывăрлăхсенчен хăрамасть, вĕсене çăмăллăнах парăнтарма пултарать. Çак пахалăхсене кура ĕнтĕ ашшĕ, федераллă судья пулса ĕçлекен Олег Викентьевич Иванов, хăй те спортпа туслăскер, ывăлне пĕчĕклех спорта явăçтарма пуçланă. Каярахпа Вадим спорт комплексне кĕрешекенсен уйрăмне çӳреме тытăннă. Нумаях та вăхăт иртмен, пултаруллă арçын ача хăйне вĕрентекенсене район тата республика шайĕнчи çĕнтерӳсемпе савăнтарма пуçланă. Иртнĕ тата кăçалхи çулсенче вăл темиçе хут та çĕнтерӳ пьедесталĕ çинче пулчĕ. Шупашкарти çамрăксемпе ачасен «Спорт» спорт шкулĕнче Аслă Çĕнтерĕве 70 çул çитнине халалланă уçă ăмăртура 25 килограмм таякан ачасем хушшинче ирĕклĕ майпа кĕрешсе пĕрремĕш вырăн çĕнсе илчĕ. Март уйăхĕнче РФ пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ Юрий Шереметьевăн парнисене çĕнсе илессишĕн Хĕрлĕ Чутай салинчи «Хастар» спорт комплексĕнче иртнĕ республика ăмăртăвĕнче виççĕмĕш тухрĕ.

Ирĕклĕ майпа кĕрешес вăрттăнлăхсене пĕлме çамрăк спортсмена иккĕмĕш çул ĕнтĕ Петр Кузьмин тренер пулăшать. Вадимăн ашшĕ-амăшĕ те, тренер та арçын ачан спортри пуласлăхĕ пысăк пуласса шанаççĕ.

*Альбина ЗАМУТКИНА.*

**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:** Вадим Иванов.



# Хусанта çĕнтерчĕç, кĕнекере пичетленчĕç

Иртнĕ уйăх вĕçĕнче Тутарстан тĕп хулине Хусана тĕрлĕ халăх ывăл-хĕрĕ пухăнчĕ. Кунта Раççейри шкул ачисен иккĕмĕш вулавĕ иртрĕ. Унчченхи пĕлтĕр çак вăхăтрах пулнăччĕ. Вырăс, тутар, пушкăрт, чăваш, мари, удмурт тата мордва ачисем тĕл пулчĕç. Вĕсем пурте – кĕрет мар /заочнăй/ турта мала тухнисем. Ултçĕр ытла ĕçрен 94 шкул ачин малтанхи тапхăрта çĕнтерӳçĕсен йышне лекме тивĕçнĕ. Кашни халăх ачи уйрăм секцире пайланса ĕçлерĕ.

Пирĕн республика чысне Шупашкар районĕнчи Тутаркасси шкулĕнчен Марина Васильева /10-мĕш класс, ертӳçи – А.В.Ишова/, çак районти Кăшавăш шкулĕнчен Таня Карамаева /11-мĕш класс, ертӳçи – Е.А.Майков/ тата Шупашкарти 59-мĕш шкулти Катя Антошина /вĕрентекенĕ – Е.Л.Чернова/ хӳтĕлерĕç. Чăваш филологийĕн секцийĕнче 12 вĕренекен тупăшрĕ. Тутарстанри чăваш маттурĕсем те хăйсен тĕпчев ĕçĕсемпе паллаштарчĕç. Çивĕч тупăшура Таня Карамаева çĕнтерӳçĕн II степеньлĕ дипломне тата çичĕ пин тенкĕлĕх сертификата çĕнсе илчĕ, Марина Васильева – конференцин лауреат дипломне тата виçĕ пин тенкĕлĕх сертификата. Çĕнтерӳçĕсен чи лайăх 50 ĕçне «Развитие и сохранение национальных языков в поликультурном обществе» кĕнекене пухса, пичетлесе кăларнă. Вĕсене парне вырăнне кашнинех пачĕç.

Конференци хыççăн ачасем тата вĕрентекенсем Хусан хулипе паллашрĕç.

Тăван чĕлхене аталантарассине тата упраса хăварассине Тутарстанра патшалăх программи туса пурнăçа кĕртме тăрăшаççĕ. Кунта пурăнакан кашни тĕрлĕ халăх çынни хисепре. Аякран килнĕ хăнасене яланах тараватă.

***Евгений МАЙКОВ, вĕрентекен.***

Шупашкар районĕ,
Кăшавăш шкулĕ.




**САНӲКЕРЧĔКРЕ:** конференци хыççăн.

# Ĕçчен те маттур эпир

**Çĕр чăмăрĕн пĕр чĕптĕмĕ эпир,**
**Тымарсемпе тĕнче кăкне тытатпăр.**
***В.СТАНЬЯЛ***

Кунĕпех кăмпа пуçтарса хытă ĕшеннĕскер, вăрмантан тухиччен ларса канма шутларăм. Тулли карçинккана çĕре лартрăм та çывăхри юман çумне сĕвентĕм.

Çӳллĕ те лапсăркка ку йывăç. Вулли... Ытама та кĕмест, тураттисен шучĕ те çук. Çулçисем сарăхман-типмен пулсан хĕвел çути те курăнас çук. Вĕсем витĕр сарă-хăмăр йĕкелсем тĕксĕм лампочка пек йăлтăртатаççĕ. Ват йывăç йĕри-тавра – туйрасем. Вĕсем хушшинчен юманăн тымарĕсем айккинелле тăсăлаççĕ. Епле хулăн, парка вĕсем – тăпрана сирсе «сутта тухнă». «Çĕр çула та çитнĕ пуль эс, – калаçатăп юманпа, – çапах тĕреклĕ. Тымарусем мĕнле çирĕп тата! Ачусем – туйрусем – епле йышлă! Эс нихçан та çĕр пичĕ çинчен çухалас çук!..»

...Темшĕн юман тусăма тăван чăваш халăхĕпе танлаштарас килчĕ. Çĕр çинчи 130 ытла халăхран пĕри вăл – чăваш халăхĕ. Унăн та хăйĕн пуян историйĕ, йăли-йĕрки, чĕлхи, тĕнĕ пур. Мĕн кăна курман хăй ĕмĕрĕнче чăвашсен несĕлĕсем?!

Авалхи эрăн XIII-XII ĕмĕрĕсенчех палăрнă мăн асаттемĕрсем /хунсем/ Дон, Дунай, Азов, Каспи шывĕсем хĕрринче пурăннă чухнех тĕрлĕ халăхпа хутшăннă, нумай вăрçă асапне тӳснĕ. Çиччĕмĕш ĕмĕрте вĕсем /пăлхарсем/ Аслă Пăлхар патшалăхне йĕркелесен хазарсен мăшкăлне тӳснĕ. Саккăрмĕш ĕмĕрте Атăл тăрăхĕнче Атăлçи Пăлхар патшалăхне туса хурсан монгол-тутарсен пусмăрне лекнĕ. Вунпиллĕкмĕш ĕмĕрте йĕркеленнĕ чăваш халăхĕ Хусан ханлăхĕн танатине çакланнă. Тутарсен мăшкăлĕнчен хăтăлас тĕллевпе Вырăс патшалăхĕпе пĕрлешнĕ. Чĕлхе тĕнĕпе пурăннăскерсем, хăй вăхăтĕнче мусульман, православи тĕнне йышăннă, халĕ христианство тĕнĕпех пурăнаççĕ. Темле пулсан та, чăтăмлă чăвашсем хăйсен йышне чакма паман, çырулăхне çухатман, малашлăхшăн ырă «вăрлăх» акса хăварнă.

Паян икĕ миллионлă чăваш халăхĕ çĕр чăмăрĕн кашни кĕтесĕнчен хăйĕн сассине парать. Апла пулсан, вăл пĕтмест. Чикĕ леш енче Чăваш çĕршывне, ун халăхне Н.Бичурин тĕпчевçĕ тата çыравçă, П.Егоров архитектор, Н.Охотников математик тата физик, И.Яковлев просветитель, К.Иванов, Г.Айхи классик поэтсем, А.Николаев космонавт, Н.Павлова балерина, Праски Витти художник пек чаплă çынсен пархатарлă ĕçĕсенчен пĕлеççĕ. Чыс та мухтав пултаруллă çыннăмăрсене!

Кунти халăх ĕçченлĕхĕпе, ăсталăхĕпе тĕлĕнтерет. Çĕр ĕçĕпе, пир-авăр ăсталăхĕпе чапа тухнă. Чăваш Ен çут çанталăк ресурсĕсенчен пуян мар. Çапах та экономика тĕлĕшĕнчен аталану çул-йĕрне куллен шыраççĕ. Тĕнче шайĕнче пирĕн хăватлă промышленность тракторĕсене, эреш-тĕрре, пиравăра хакларĕç пулсан, асăннă пурлăха сутса тупăш курмалăх майсем пур. Экономика çыхăнăвĕсене çирĕплетме куравсем, конкурссем ытларах йĕркелесен те аван. Çулсеренех республика кунне халалласа иртекен «Атăлçи çăл куçĕсем» фестиваль йышши уявсене, ман шухăшпа, ытларах ирттермелле. Культурăшăн çеç мар, экономика тата политика тăнăçлăхĕшĕн те усăллă ку.

Пирĕн «Сувар», «Эреветь», «Уяв» юрăпа ташă ансамблĕсем ют çĕр-шывсенче гастрольте пулса тăван халăхăн ăс-хакăл культури çӳллĕ шайра пулнине ĕнентерчĕç. Пултаруллă культура ĕçченĕсем, чăваш юрăçисем, ташăçисем чăвашлăха ют çĕршывсенче туптаççăр.

Чăваш Ен спортпа туслă. Тĕнчипе паллă В.Егорова, Е.Николаева, В.Андреев çăмăл атлетсем пек вуншар спортсмен – Чăваш Ен мухтавĕ!

Г.Айхи поэт-куçаруçă Франци, Германи, Швеци литературипе чăваш сăмахлăхне пĕр тĕвве çыхăнтарнă. Никита Бичурин Китай, Монголи халăхĕсемпе чăвашсем хушшинче туслăх кăвайтне чĕртнĕ. Асăннă çĕршывсемпе çыхăнланас туртăм халĕ вăйланса пырать.

Пĕр сăмахпа, чăвашсен халăх, Республика, чĕлхе, йăла-йĕрке сумлăхне ют çĕр-шывсем умĕнче ӳстермелле. Тĕрлĕ çĕре саланнă чăваш чунлă çыннăмăрсемпе пĕр çăвартан пурăнсан пире татах та хисеплĕç. Республикăра, ун тулашĕнче ентешлĕхсем йĕркелеме пуçлани те эпир вăйлă халăх пулнине тепĕр хутчен çирĕплетет.

Чăваш пулнинчен вăтанма кирлĕ мар. Ун пек чухне пире кашни хисеплĕ.

...Вăйлă çил-тăвăл тухрĕ. Лăскарĕ-лăскарĕ ват юмана. Тураттисемпе сулкалашрĕ ĕмĕрхи йывăç, çулçисемпе çатăлтатрĕ, туйрисене хӳтĕлерĕ. Çук, парăнмарĕ çав çиле.

Чăваш халăхĕ те маттур яш-кĕрĕм хăвачĕпе хăйне упраса хăварĕ. Чăваш пулнă, пур, пулĕ!

***Зинаида СВЕКЛОВА, вĕрентекен.***

Шăмăршă районĕ,
Палтиел шкулĕ.

● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП

## «Зодиак» салат

***Салат валли çур кило шампиньон, 1 пуç сухан, 1 чăх пĕççи, 2 хăяр, 2 çăмарта, 1 банка маринадланă кукуруза, кăштах майонез, тăвар тата пăрăç кирлĕ.***

Лайăх çуса тасатнă кăмпана вакламалла та хĕртнĕ çатмара вăтам çулăм çинче хупласа пăшăхламалла. Сăрхăннă сĕткене тăкмалла, хысçăн кăштах хĕвелçаврăнăш çăвĕ ямалла.

Вĕтетнĕ сухана ылтăн тĕс çапиччен уйрăммăн ăшаламалла. Пĕçерсе сивĕтнĕ чăх какайне, çăмартапа хăяра тăваткалласа турамалла. Пур çимĕçе те пĕрлештермелле те кукуруза, тăвар, майонез хушса пăтратмалла.

## Килте хатĕрленĕ кăпăш кулач

***Çак тутлă кулач валли 250 грамм çăнăх, 6 грамм типĕ çĕпре, 4 грамм тăвар, 30 грамм услам çу е маргарин, 100 миллилитр сĕт, 50 миллилитр шыв кирлĕ. Çиеле сĕрме 1 çăмарта сарри тата çур кашăк сĕт илĕр.***

Малтан пур типĕ çимĕçе те хутăштармалла. Хыççăн маргарин, сĕт тата шыв хушса чуста çăрмалла. Ăшă çĕре хурса пĕр сехет çурă тытмалла. Каллех çăрăр та тепĕр 10 минут кĕтĕр.

Чустана пилĕк пĕр пек пая пайласа тӳркĕтеслĕх евĕр йĕтĕрлемелле. Хĕррисене çавăрса çыпăçтармалла та çур сехет тытмалла. Хыççăн çиелтен темиçе урлă йĕр касса çăмартапа сĕт хутăшне сĕрмелле. 180 градуса таран хĕртнĕ духовкăна лартса 20-30 минут пĕçермелле.

## Ирĕлекен печени

***Çимĕçе хатĕрлеме 200 грамм услам çу, çавăн чухлех майонез, 1 çăмарта, 1 стакан çăнăх, çур чей кашăкĕ тăвар, хăвăра кирлĕ чухлĕ сахăр, 1 чей кашăкĕ чустана кăпăшлатмалли порошок кирлĕ.***

Çемçетнĕ услам çăва майонез хушса лăкăр, çăмарта, тăвар, сахăр ярса тепĕр хут лайăх пăтратăр. Унтан алапа алланă çăнăхпа кăпăшлатмалли порошок ярса чуста çăрăр.

Хатĕр чустаран пĕчĕк печенисем туса çу сĕрнĕ пергаментпа витнĕ тимĕр ывăса вырнаçтарăр. Вĕсен хушши 1 сантиметр пек пулмалла. 200 градус таран хĕртнĕ духовкăра хĕрлĕ тĕс çапиччен, 15-20 минут тытăр.

● ХАМĂР ХУШĂРА

# Диетăсăрах яштака пӳллĕ пулма май пур-и?



Пикесем яланах илемлĕ те яштака кĕлеткеллĕ пулма ăнтăлаççĕ. Çавна май тĕрлĕ диетăна пăхăнатпăр, спортпа туслашатпăр тата ытти те. Анчах тутлă апат-çимĕç те илĕртет-çке-ха, ăна тутанса пăхмасăр та чăтаймастăн хăш чухне. Хăвăра çакăн пек çынсен йышне кĕртетĕр-тĕк темиçе правилăна пăхăнса çес çăмăллăнах ытлашши ӳтрен хăтăлма пултаратăр. Çак 5 «ылтăн» правило чăнах та ĕмĕтленнĕ кĕлеткеллĕ пулма пулăшать.

- 300 миллилитр çăра чăн-чăн кофе /порошок йышши мар/ пĕçерĕр. Нумайрах корица, ванилин тата хĕрлĕ пăрăç хушăр. Çак хутăша кунне пĕрре ĕçни те организмри япаласен улшăнăвне /метаболизма/ хăвăртлатать. Анчах ку меслетпе асăрханса усă курăр: хутăша ытла нумай ĕçме юрамасть.

– Апатланма пуçличчен кашнинчех çур грейпфрут çиме тăрăшăр. Вăл организмри çусене ирĕлтерме тата унти сиен япаласенчен хăтăлма пулăшакан чи лайăх çимĕçсенчен пĕри.

– 200 миллилитр вĕри шыва корицăпа хутăштарăр. Сивĕнсен пыл хушса пăтратăр. Çуррине сыврăма выртас умĕн, юлнине ирхине тăрсан ĕçĕр.

– Апатланма пуçличчен 10-15 минут маларах 2 стакан таса шыв ĕçни те метаболизма хăвăртлатма, çимĕçе тĕрĕс ирĕлтерме пулăшать.

– Апатăн кашни татăкне 50 хутчен каяр чăмлама тăрăшăр. «Апата ĕçмелле, ĕçмеллине çимелле», – тенĕ хăйсен хыткан кĕлеткисемпе палăрса тăракан буддизм манахĕсем. Вĕсем çак правилона çирĕп пăхăннă.

Асăннă меслетсенчен пĕр-иккĕшĕнпе кăна усă курсан та кăмăла кайнă апатран пăрăнмасăрах эрнере вăтамран çур килограмран пуçласа икĕ килограма таранах çӳхелме пулать.

● ИЛЕМ КĔТЕСĔ

# Çивĕт — пике илемĕ

Вăрăм çӳç – хĕр-упраç черченлĕхĕ, хитрелĕхĕ. Ăна лайăх пăхнисĕр пуçне типтерлĕн пуçтарма та пĕлмелле. Халĕ тĕрлĕ прическа ăсталама май пур: лавккара темĕн йышши тыткăч, лак-спрей тавраш тата ытти хатĕр те сутаççĕ. Анчах эпир ытларах чухне ансат мелпе усă куратпăр, çӳçе хыçалалла тураса тыткăчпа пуçтаратпăр та хамăрăн ĕçсемпе тухса каятпăр. Ансат прическăсен йышне çивĕт те кĕрет. Эпир вара сире ахальлине мар, хăйне евĕрлине çивĕтлесе пăхма сĕнесшĕн. Апла, ĕçе пуçăнар:

1. Çӳçе пĕр енне ярса лайăх турăр.
2. Тыткăчпа /резинкăпа/ пуçтарăр.



3. Çӳçĕн пĕчĕк пайне уйăрса илĕр те ăна виçĕ пая пайласа çӳхе çивĕт тăвăр.
4. Хатĕр çивĕте айккинелле куçарăр. Юлнă çӳçе пĕр пек виçĕ пая пайлăр. Çӳхе çивĕт 1-мĕш тата 3-мĕш пайăркасем хушшинче пулмалла.
5. Çивĕтлеме 4-мĕш пайăркаран пуçлăр, ăна малтан 3-мĕш пайăрка айĕн унтан 2-мĕш пайăрка çийĕн хурăр.
6. Малалла та çавăн пек ĕçлĕр: 3-мĕш пайăркана 1-мĕш айĕнчен унтан 2-мĕш çийĕнчен вырнаçтарăр.
7. Çӳхе çивĕте малтан 3-мĕш пай çийĕн, хыççăн 2-мĕш айĕн хурăр.

Çапла майпа çӳçе вĕçне çити çивĕтлĕр. Тыткăчпа çирĕплетĕр те кашни пайăркана айккинчен кăшт турта-турта пушатăр.



● РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

*«Сывлăх сунатăп, «Тантăш» хаçат! Эпĕ 14 çулта, тăххăрмĕш класра вĕренетĕп. «Чиперук – хĕр-упраç страницине» вулама кăмăлланăран сирĕнтен канаш ыйтас терĕм. Манăн питре хура пăнчă нумай, уйрăмах сăмса çинче. Мĕнпе кăна усă курмарăм пулĕ, нимĕн те пулăшмарĕ, лосьон тавраш кĕске вăхăтлăха çеç тасатать…»*

***Ирина МАТВЕЕВА.***

*Канаш районĕ,*
*Ухман шкулĕ.*

Хисеплĕ Ирина! Çак пăтăрмах кусăм тапхăрĕнчи пур çамрăка та пăшăрхантарать пулĕ. Питри шатрасемпе пăнчăсенчен килте хатĕрленĕ маскăсемпе усă курсан та хăтăлма май пур. Тĕслĕхрен, апат содипе сĕлĕ хăрпăкĕн хутăшĕ ӳте тасатма пулăшать. 2 кашăк лапчăтнă сĕлĕ хăрпăкне лайăх вĕтетмелле те 1 чей кашăкĕ чухлĕ апат соди, 1 кашăк лимон сĕткенĕ, кăштах йӳçĕтнĕ е ахаль сĕт хушса лайăх пăтратмалла. Хутăша пите сĕрсе 10 минут тытмалла, лĕп шывпа çумалла. Ку маскăна эрнере икĕ хутчен тума юрать. Вăл ӳте хура пăнчăсенчен тасатать, пар шăтăкĕсене те пĕчĕклетме пулăшать. Çапах та тухтăрпа е косметологпа канашлăр.

*Страницăна Нина ЦАРЫГИНА (56-11-80) хатĕрленĕ.*

**Ăсталăх пĕлекен çын çăкăрсăр лармасть.**

## Авалхи Египетра кушаксене мĕншĕн хисепленĕ?

Этемпе кушак хăçантанпа юнашар пурăннине никам та пĕлмест. Хăш-пĕр çăлкуç палăртнă тăрăх, çак вăхăт вунă пин çулпа танлашать, теприсем вара ултă пин çул теççĕ. Авалхи Египетра кушаксем хăш вăхăталла алла хăнăхнине кăна тĕрĕс калама пулать. Ку вăл пирĕн эрăчченхи виççĕмĕш пинçуллăхра пулнă. Çав авалхи цивилизацире кушакка кил таврашне хăнăхтарасси пурнăç ыйтнипе килĕшсе тăнă. Авалхи Египет, чăн малтанах, ял хуçалăхлă çĕршыв пулнă. Çĕрпе ĕçлекен кирек хăш çĕршывăн тăшманĕ вара – тыр-пул тухăçлăхне чакаракан чĕрчунсем. Малтанах кушак кăшлакан чĕрчунсемпе тата çĕленсемпе кăна кĕрешнĕ, çакăншăн хисепленĕ те ăна. Унсăр пуçне вăл чума чирне саракан йĕке хӳресене тытнă, çапла майпа нумай-нумай çыннăн пурнăçне çăлнă. Чи кăсăкли, кушак питĕ хаклă чĕрчун шутланнă, пуян çынсем кăна туянма пултарнă ăна. Анчах хăвăрт ĕрченӗрен çак пулăшуçăсем часах чухăнсем патне те çитнĕ.

Кушаксене сăваплă чĕрчун тесе пуççапма тытăннă. Ку вăл пирĕн эрăччене виççĕмĕш пинçуллăх пуçламăшĕнче, Бубастис хулине çĕклесен, пулнă. Шăпах çак хулара пулăхлăхшăн, кил-çуртшăн, хаваслăхшăн, амăшлăхшăн Баст хĕрарăм турра пуççапнă. Унăн тулаш сăнĕ – кушак пуçĕллĕ хĕрарăм кӳлепи. Çавăнтанпа кушаксене çак хĕрарăм турăпа танлаштарма тытăннă. Вĕсене усăллă пулнăшăн унччен юратнă-ха, анчах халĕ вара тĕнпе хӳтĕлеме тытăннă, вĕсем турă вырăнĕнче пулнă. Кушак вилсен унăн кĕлеткине мумиленĕ, хуçисем вара çитмĕл кун хуйхи траур тума йышăннă. Ун хыççăн мумиленĕ чĕрчуна ятарлă масарта пытарнă.



## Шупашкар ачи тĕнчене улăштарма пултарать!



Шупашкарта пурăнакан Максим Иванов тĕнчене улăштарма пултаракан ачасен списокĕнче пиллĕкмĕш тăрать. Вунултă çул тултаричче вăл хăйĕн сакăр изобретенине патентланă, çав шутрах автомобилĕн хăрушсăрлăх системине тата пур çĕрте те çӳреме пултаракан инвалид креслине.

Унсăр пуçне Максим республикăри тата пĕтĕм тĕнчери конкурссенче сахал мар çĕнтернĕ. 2014 çулта инвалидсене валли кресло шухăшласа тупнăшăн ăна Мускаври Инноваци технологийĕсен «Архимед-2014» салонĕн медалĕсемпе чысланă. Çав çулхинех унăн «Хăй тĕллĕн куçса çӳреймен çынсене валли – транспорт хатĕрĕ» проекчĕ пĕтĕм тĕнчери James Dyson Award 2014 конкурсăн наци тапхăрĕнче финала тухнă.

2013 çулта Максимăн «Инвалидсене валли – транспорт хатĕрĕ» тата «Пӳлĕмре куçса çӳремелли транспорт хатĕрĕ» ĕçĕсем Чăваш Енри Экономика аталанăвĕн министерстви ирттерекен «Çамрăк изобретатель» республика конкурсĕнче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Çавăн пекех ăслă арçын ача Google Science ирттерекен «Тĕнчене улăштарма пултаракан 90 шухăш» конкурсра финала тухнă.

## Вăрттăнлăхлă пуç мими

•Пуç мимне мĕн чухлĕ ĕçлететерĕн, вăл çавăн чухлĕ çитĕнет. Уйрăмах иккĕрен пуçласа вунпĕр çула çитиччен вăйлă аталанать.

•Пĕлӳ шайĕ пуç мимипе çыхăннă чирсене витĕм кӳрет.

•Çыннăн нерв тытăмĕнчи сигналсен хăвăртлăхĕ сехетре 300 çухрăма çитет. Анчах ватлăх еннелле çак хăвăртлăх пĕчĕккĕн чакать.

•Чи пысăк ăс-тăн кăтартăвĕ – яппун çыннисен.

•Тĕлĕнмелле пулин те, сăнӳкерчĕке пăхса сăнасси пуç мимишĕн шахматла выляссинчен чылай йывăртарах.

Хăш-пĕр çын тулашран пăхсан ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть, анчах ыттисем ăнланма пултарайман, мистикăлла туйăнакан ĕçсем тăвать. Çакна ăсчахсем те пытармаççĕ, этем пуç мимийĕн эпир пĕлмен пултарулăхĕ те пур, анчах вăл пур çыннăн та палăрмасть. Ку мĕнпе çыхăннине вара паянхи кунччен никам та татса паман-ха, тавлашусем халĕ те пыраççĕ.



## «Каникул» сăмах мĕнле пулса кайнă?

Авалхи римлянсем Пысăк Йытă çăлтăрлăхĕнчи тĕп çăлтăра – Сириуса – Каникула тенĕ /«canic» – йытă/. Тӳпе хĕррисче Каникула çуллахи шăрăх кунсенче курăнма тытăннă. Çавăнпа Сенат çав тапхăра канмалли кунсем, Каникула кунĕсем тесе пĕлтернĕ.

Халĕ вара каникул çуллахи кăна мар, кĕркуннехи те, хĕллехи те, çуркуннехи те пулать. Анчах та чи вăрăм, чи юратнă каникул – паллах, çуллахи!




## Пĕлтерĕшлĕ япаласем шухăшласа кăларакан ачасем

Ăсчахсем тем те пĕр шухăшласа кăларнине пĕлетпĕрха. Çак тĕллевпе вĕсем нумай-нумай çул ĕçлени çинчен те илтме пулать. Анчах тепĕр чухне мĕн те пулин шухăшласа кăларасси питĕ ăнсăртран пулать-çке, çакна ахаль ача та тăваять.

**Брайль шрифтне** – суккăрсене валли хатĕрленĕ пăнчăллă-мăкăрăлчăклă çырулăх системине – 15 çулти Луи Брайль шухăшласа кăларнă /1824 çулта/. Хăй висĕ çулта чухне сарăмсăр инкеке пула суккăрланнă. Луи Валентин Хауи шухăшласа кăларнă мăкăрăлчăклă çыру меслетне тĕпе хунă, ăна артиллери офицерĕ Шарль Барбье шухăшласа тупнă çĕрлехи вăхăтсенче те хыпарлама май паракан системăпа пĕрлештернĕ. Барбье шрифчĕ хытă хут çинчи шăтăк-путăксем пек курăннă, унпа усă курма меллех пулман.

2012 çулта 14 çулти Джона Кон **япăх илтекен çынсене юрă итлеме пулăшакан хатĕр** шухăшласа кăларнă.

Юр çинче çӳрекен машинăпа ярăнма кăмăллакансем **Бомбардье фирми** çинчен илтнех. Ăна никĕслекенĕ, Жозеф-Арман Бомбардье, юр çинче çӳрекен пĕрремĕш машинине шухăшласа кăларнă чухне вунпиллĕкре кăна пулнă. Ашшĕ ывăлне кивĕ Форд парнеленĕ. Нумай пĕлме юратакан арçын ача вара ăна самантрах салатса тăкнă та Канадăри хаяр сивĕ хĕллене валли ăнăçлă машина пуçтарнă.

Конькипе ярăнма шутсăр кăмăлланă Честер Гринвуд 1873 çулта асламăшне пралук çумне çăм çирĕплетме ыйтнă. Çапла вара **хăлхасене сивĕрен сыхлакан хăлхалăхсем** /наушник/ çуралнă. Арçын ача ун чухне вунпиллĕкре кăна пулнă.

«Футурама» мультсериалти Хьюберт Франсуорт профессор тата пуççăр гени прототипĕ Фило Франсуорт чăнах та гени пулнă. Вунпилĕк çулта Фило ӳкерчĕксене электронлă майпа инçете кăтартма пулăшакан проект – хальхи телевизор тĕслĕхне – пурнăçланă. Часах вăлах вакуумлă пăрăх – **кинескоп** – шухăшласа кăларнă, унтан электрон ӳкерчĕке пĕрремĕш хут инçете куçарнă.

18 çулти Эйша Кхаре, Калифорни штатĕнчи шкул ачи, **аккумуляторăн çĕнĕ тĕсне** шухăшласа тупнă. Çĕнĕ йышши хатĕр темиçе сехетре мар, çур минутрах заряд илме пултарать. Çавăншăн Эйша Кхаре çамрăк ăсчахсен премине тивĕçнĕ.

Америкăри тепĕр шкул ачи Джастин Бекермен **пĕчĕк те меллĕ шыв ай кимми** шухăшласа кăларнă. Хакĕ те лайăх унăн – икĕ пин доллар çеç. Пĕр пассажирпа çӳрекен кимĕ икĕ метр тарăнăшне анса шыв айĕнче темиçе сехет пулаять.

Вунпилĕк çулти шкул ачи Джек Андрака **онкологи чирĕсене тупса палăртмалли çĕнĕ меслет** шухăшласа тупнă. Вăл чир пуррипе çуккине пилĕк минутранах палăртаять.

Вунвиçĕ çулти Мэллори Кьювмен **иклетнине ирттерекен эмел** шухăшласа кăларнă – сахăрпа панулми уксусĕнчен тăракан леденец. Ку эмел чăнах та пулăшать!

Пĕчĕк ачасем те пĕлтерĕшлĕ япаласем шухăшласа кăларма пултараççĕ. Тĕслĕхрен, 8 çулти Аланна Майерс /Флорида штачĕ/, велосипедпа ярăннă чухне асфальт çинче чĕркуççине тăтăш суранлатакансĕр, бинтламалли пункта çӳресе асапланса çитнĕ. Çавăнпа та вăл **ӳте ыраттармасăрах бинта уйăрмалли меслет** шухăшласа тупнă: ахаль супăнь, лаванда çăвĕ тата шыв хутăшĕ.

Фрэнк Эпперсон 11 çулта чухне урамра содăллă шыв тултарнă тата кашăк чикнĕ стакан манса хăварнă. Ку ĕç хĕлле пулса иртнĕ. Ир енне стаканра мĕн пурри пĕтĕмпех шăнса ларнă. Çапла **патак çинчи шăнтнă лимонад** çуралнă, каярах Фрэнк ӳссе çитсен çак енĕпе бизнес та пуçарса янă.

Пĕррехинче 6 çулти Роберт Пэтч ашшĕнчен вылямалли машина туянса пама ыйтнă. Арçын ывăлне лавккана илсе кайнă, анчах шăпăрлана килĕшекен тавар тупăнман. Вара ашшĕ ăна килĕшекен машинăна ӳкерсе кăтартма ыйтнă. Çапла 1936 çулта тĕнчене **ӳпĕнекен кузовлă вылямалли машина** килнĕ. Ашшĕ ывăлне çак теттене туса панă кăна мар, ăна патентланă та /авторлăхне çирĕплетнĕ/.

Çамрăк генисем Америкăра кăна пурăнмаççĕ. Львов хулинчи Максим Лема вуникĕ çулта **кирек хăш пӳлĕме те сканерлама пултаракан, лаптăка виçекен, тулли план тăвакан тата илнĕ информацие компьютера ярса паракан робот** шухăшласа кăларнă.

Мускавра пурăнакан вунă çулти Анастасия Родимина вара **пичет графикин çĕнĕ тĕсне** шухăшласа тупнăшăн патент илнĕ.

*Страницăна Лариса ПЕТРОВА (56-11-80) хатĕрленĕ.*

**Вениамин ТИМАКОВ**

# Сăмах илемне туйсан...

**(сăвă çырма вĕренекенсене пулăшма)**

*(Малалли. Пуçламăшĕ 25-32, 34-41, 43, 44-мĕш номерсенче).*

Асăннă хирĕçӳ – произведенин пĕр пайĕ, урăхла каласан, пĕр пайăрăмĕ (деталĕ) пулса тăрать. Çапах та унăн пĕлтерĕшĕ пысăк, мĕншĕн тесен унта произведенире аталанмалли пысăк шухăш пур. Тата пурнăçăн чĕрĕ ӳкерчĕкĕ те курăнать.

Сăвăри е поэмăри ăнăçлă деталь произведени пахалăхне нумай ӳстерет, тĕп шухăша кĕскен, кăмăла хускатмалла калама пулăшать.

А.Воробьевăн «Пĕрремĕш утăм» сăввинче пĕчĕк ача пĕр утăм ярса пусни лирикăллă деталь пулса тăрать. Сăввăн ытти йĕркисем те пĕтĕмпех унпа çыхăннă.

Вокзалта çынсем поезд кĕтсе лараççĕ. Вĕсен хушшинче пĕчĕкçĕ ачапа амăшĕ те пур. Хăйне илĕртекен япалана курса ача ун еннелле туртăнать, хуллен утма пуçлать. Ачашăн вокзалти ытти çынсем те хĕпĕртеççĕ.

...Вуникĕ хут Мускав сехечĕ
Çапать те, гимн ян каять.
Чăваш ачи утма вĕренчĕ,
Тесе чыс тунăн туйăнать, –

тет поэт, çынсен хавхаланăвне палăртса.

А.Воробьевăн «Ташлать бухгалтер Агеносов» ятлă сăвă пур. Агеносов – иртнĕ вăрçă инваличĕ, хăрах уралла çын. Поэтшăн бухгалтер ташлани чуна хускатмалла деталь пулса тăрать. Вăл ăна сăнласа пысăк шухăш калать: инвалид вăрçа ташласа ылханать.

Пайăрăмсем çутçанталăкра, пурнăçра туллиех. Акă турат çинче шăнкăрч юрлать, çынсем хире ĕçлеме тухаççĕ. Анчах кирек хăш деталь те сăвă пахалăхне ӳстерет тесен тĕрĕс мар. Çыраканăн япалана çĕнĕлле курма, çынсем асăрхаманнине асăрхама тăрăшмалла.

Ĕлĕк сахал çĕрлĕ хресченсем нумай пулнă. Вĕсен чухăнлăхне, хĕсĕк пурнăçне литературăра сахал мар çырса кăтартнă. Кăсăя Васлейĕ те «Юмах мар ку, чăн сăмах» сăввинче ĕлĕкхи пурнăçăн тертне, хресчен çĕр сахаллипе аптранине сăнласа парать. Çавах та асăннă произведени ку темăпа çырнă ытти сăвăсем хушшинче пăтрашса каймасть, мĕншĕн тесессĕн унăн хăйĕн çĕнĕлĕхĕ пур: хресчен хăйĕн ани çине ĕçлеме каять. Сăхманне сарать те канма ларать. Унтан ĕçлеме тăрать – ани çук. Сăхманне илсе, киле кайма тăрать. Çав вăхăтра хăйĕн анине курах каять.

Пĕчĕк ана, хыт ана
Саплăк пысăкăш кăна,
Астумасăр сăхманпа
Витсе хунă-мĕн ăна.

Çыннăн яланах ĕç, кĕрешӳ, тивĕç туйăмĕ пулмалла. Ача чухне вăл, паллах, пĕчĕкрех пулать, çул иртнĕçемĕн ӳссе пырать. Чăн-чăн кĕрешӳçĕ çакна яланах туйса тăрать. Çакă произведенин тĕп шухăшĕ. Сăвă илемлĕх енчен те, форми енчен те çĕнĕлле илтĕнет. Акă хăш-пĕр йĕркесен аллитерацилле кĕвĕлĕхĕ:

Саккăрта эпĕ сарă ут тытса утлантăм,
Сакăр утăмра сасартăк эп йăвантăм,
Саламларĕ сапарни тăрри пĕр авăк,
«Ĕçле-ĕçле çи!» пиллерĕ пĕчĕк кайăк.

Поэтăн çутçанталăк ӳкерчĕкĕсем (детальсем) сăнлăхсенче сарăлса, пысăк шухăша куçса пыраççĕ. Ача лаша çинчен ӳксессĕн, сапарни «пĕр авăк» саламлать. Ĕçе ярăх тунăшăн тепĕр хутĕнче ачана хулă лекет, ун чухне «тип мăян тăрри ик авăк» саламлать. Пурăннăçемĕн çын пысăкрах ĕç тытать. Унпа пĕрлех ĕç йыврăлăхĕ те ӳссех пырать:

Халь ĕнтĕ шап-шурă манăн сар кăтрамăм,
Пурпĕрех мана манман-ха ман тăванăм.
«Ĕçле-ĕçле çи!» юратнă кайăк
Хулпуççи çинче юрларĕ çичĕ авăк.

Сăвăра «кайăк» сăнарĕн пĕлтерĕшĕ те строфасерен сарăлса пырать. Кайăк малтан çутçанталăк ӳкерчĕкĕн деталĕ кăна, кайран вăл чун-чĕре йыхравне, поэт шухăш-кăмăлне ĕçе тĕплĕн тума хăйне май йыврăрине, анчах ăна пурнăçлама май пуррине кăтартакан поэзи символĕ пулса тăрать.

Поэтăн ырă чĕнĕвĕ юлашки йĕркесенче уйрăмах уçăмлă янăрать:

Сухапуç тытни суха йĕрри хăвартăр,
Мăлатук тытни шак! сасăпа вăрантăр.
Космонавт çул хывтăр çăлтăр витĕр,
«Ĕçле-ĕçле çи!» юрра кашни çын илттĕр!

Сăвăри пайăрăмсем (детальсем) витĕмлĕ пуласси, пысăк шухăша уçса парасси авторăн сăнас, пĕтĕмлетес ăсталăх пурринчен килет.

## Символла (палăртакан) сăнлăх

Символ – пĕр-пĕр япалана палăртса тăракан паллă. Сăмахран, çурлапа мăлатук пур, рабочисемпе хресченсен аслă пĕрлĕхне палăртнă. Ялавсен, хĕрлĕ çăлтăрăн, хуласемпе ялсенчи палăксен символла пĕлтерĕшне лайăх ăнланатпăр. Хăш чухне пĕр-пĕр çын сăнарĕ те ытти çынсемшĕн символ пулса тăрать. Акă, сăмахран, Прометей. Авалхи грексен мифологийĕ тăрăх, вăл турăсен патшинчен – Зевсран кăвар вăрласа тухнă иккен, çынсене унпа усă курма вĕрентнĕ. Çавăншăн ăна Зевс хăрушă наказани панă: Кавказри чул ту çумне сăнчăрласа лартнă. Кашни кун ăмăрткайăк пырса Прометей пĕверне çинĕ. Çак асапран ăна кайран Геракл анчах хăтарнă.

Халăхшăн хăйĕн пурнăçне хĕрхенмен паттăрсем çинчен каланă чухне хальхи вăхăтра та Прометей сăнарĕпе усă кураççĕ. Ирĕклĕхшĕн кĕрешекен иксĕлми вăй-халлă çынсен сăнарĕ Спартак ятĕнче те упранать.

Поэзире символсемпе час-часах усă кураççĕ. Ку вăл авалтан пыракан лайăх ен, поэзие халăх лирикинчен, юмахĕсенчен куçнăскер. Акă вырăс фольклорĕнчи кайкăр пĕлтерĕшне илер. Ку – хăюллă, хитре, вăйлă каччăн сăнарĕ. Акăш сăнарĕ вара хӳхĕм, яштак пикене пĕлтерет.

Чăваш юррисенче те символла сăнлăхсем сахал мар. Акă, сăмахран, «юман» – атте сăнарĕпе, «çăка» анне сăнарĕпе çӳрет. Поэтсем халиччен палăрнă символла сăнлăхсемпе кăна усă курмаççĕ. Вĕсем хăйсем те çĕннисем шыраççĕ.

Вилтăпри часах шуралчĕ,
Юр айне вăл пулчĕ.
Хурăн çеç – пĕччен хуралçă –
Сыхламашкăн юлчĕ, –

тет Хусанкай «Таня» поэминче паттăр хĕрпе йывăç сăнарне пĕрлештерсе.

Яков Ухсайăн хурăнĕ вара – нумай инкек тӳснĕ, тăшмана çĕнтерсе килнĕ салтак.

Çутçанталăкра нумай-нумай çĕнĕ сăнлăх тупма пулать. Ку енĕпе Алексей Воробьев поэзине палăртмалла. Унăн символла тĕрлĕ сăнлăхсенчен пĕри – йăмра. Сăвăç хăйĕн «Йăмра» поэминче тăван халăхăн кун-çулне, кăмăлне кăтартнă. «Ватă йăмра» сăввинче йывăç сăнарĕнче вара – канăçа пĕлмен çĕрĕç çынни.

Ял пуçĕнче çиле чупмашкăн ирĕк,
Ирех кашлаççĕ ватă йăмрасем.
Кĕрхи самант, ăш вĕçнĕ бригадир пек,
Килтен киле çӳрет тем янраса.

Сăвăри кашни ӳкерчĕкех символла сăнлăх пулаймасть. Унăн урăх пĕлтерĕшне туса произведение çĕнĕлле аталантармалла.

**(Малалли пулать).**

## Ан пултăр вăрçă нихăçан!

Ан пултăр вăрçă нихăçан!
Çапла эпир калатпăр.
Аван, тату пурнăçпалан
Кун-кунлама сунатпăр.

Тыл ĕçченĕ, ветеран,
Тайма пуç сана!
Сывлăх, ырăлăх ялан
Пултăрччĕ кăна.

Тăнăçлăхшăн пĕр кана
Тăрăшнă мĕн пур вăйран.
Эсир курнă нушана
Курас марччĕ нихăçан!

**Виктория НИКОНОРОВА.**
Муркаш районĕ,
Шетмĕпуç шкулĕ.

## Хитре Пушкăрт тăрăхĕнче

Тăван Пушкăрт çĕрĕ çинче,
Илемлĕ Слакпуç ялĕнче
Çуралнă талантлă поэт –
Ăна пур чăваш та пĕлет.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче,
Иван Яковлев патĕнче
Иванов вĕреннĕ чухне
Çырас туйăм çĕклет чунне.

Кĕçтенккин ăслă пуçĕнче,
Канăçсăр пуян чунĕнче
Ыр туйăм çеç амаланать,
Чĕри поэзипе çунать.

Чĕмпĕрте ăс пухнă чухне
Çырать «Нарспи» поэмине.
Яковлева хăй хайлавне
Вулаттарса уçать чунне.

Пăтрашуллă саманара,
Халăх пăлханнă вăхăтра
«Нарспи» поэма çуралать,
Вăл халăх асĕнче юлать.

Хайлав вилĕмсĕр пуласса,
Çĕршывĕпе сарăласса
Ун чух никам та тĕлленмен –
Пĕр Яковлев иккĕленмен.

Иванова пĕрмай çырма,
Поэзие шав юратма
Хавхалантарнă-çке чунтан,
Вăл пулнă хисепре ялан.



Даша МИХАЙЛОВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) *ӳкерчĕкĕ*.

Илемлĕ Иванов чĕлхи,
Янравлă – чăн çăлкуç юххи.
Чăнни нумай хайлавĕнче,
Ун вилĕмсĕр поэминче.

Тӳр чунлă пулнă-çке ялан,
Пит тăрăшнă мĕн ачаран.
Вăл çырнă пурнăç кĕнеки,
Маттур та хастар Кĕçтенкки.

Силпи – пуян, йăмраллă ял,
Ăна савман чăваш сахал.
«Нарспи» поэма манăçми.
Ĕмĕр-ĕмĕр асран кайми.

Тĕп сăнарсем – Нарспи, Сетнер,
Тăхтаман, Сентти, Михетер…
Çав сăнарсем пирĕн умрах,
Пурнаççĕ яланах чунрах.

Юратнă Сетнере Нарспи,
Çакна ăнланнă пур Силпи.
Инкек çӳренĕ çывăхрах,
Икĕ чунпа юнашарах…

Телейсĕр шăпа асапне
Турри пиллемĕ вĕсене.
Пĕрле нумай пурăнайман,
Юратупа савăнайман…

Хитре Пушкăрт тăрăхĕнче,
Хĕвеллĕ Слакпуç ялĕнче
Çуралнă вилĕмсĕр поэт –
Ăна паян тĕнче пĕлет!

**Николай АГАКОВ.**
Канаш районĕ,
Шуркасси.

## Илья Клочков фотокорреспондента

Маттуртан та маттурри!!!
Сатуртан та сатурри
Етĕрне тăрăхĕнчи
Чи ĕçчен чăваш ачи.

Сăнӳкерчĕк сăнарçи,
Фотокружок ертӳçи,
Чăваш Ен тăрăхĕнчи
Пит ăста чăваш ачи.

«Шырав» ялан шыравра.
Вăл малта ăмăртура.
Ырă тĕслĕх кăтартать,
Ăс-тăн пухма пулăшать.

Хăйĕн савнă мăшăрне,
Пăрчăкан пек арăмне
Тата икĕ ывăлне
Вăл парать чун ăшшине.

Сумлă Илья Клочкова
Пĕлмен çын çук таврара.
Пулас çамрăк ăрăва
Аслă çула кăларать.

Волков академик та,
Паллă çын, этнограф та
Ун ĕçне курса хакланă,
Пултарулăхшăн мухтанă.

Пулăн эс ялан малта.
Чыс, хисеп сана ялта!
Мускавра та тус-йышпа
Мухтанатпăр халь санпа!

**Роза ОСИПОВА.**
Шупашкар,
2-мĕш шкул.

*Лайăх юрă ватăлмасть.*

## Ребус




**Çакăнта ваттисен сăмахĕ вуланĕ.**

## «Кашни йĕркере тăватă сăмах»
### пуçватмăш

**Пĕррен вĕçĕ иккĕмĕшĕн пуçламăшĕ. Вĕсене тупма чăвашсен кларăшĕ «çынна кура мухтавĕ» пулăшĕ.**




1. Сĕтрен хатĕрленĕ çимĕç. Шăратнă май пулса тухнă металл хутăшĕ. Пулă. Пур те мар пулин те, хĕл пуçланас умĕн çулçă тăкакан çутçанталăк «ачи». 2. Чăваш композиторĕ. Хăватлă туйăм. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çапăçнă паллă чăваш сăвăçи. Чăваш халăх поэчĕ. 3. Чăваш çыравçи. Куçĕ те çук, алли те çук, ури те çук; ни этем, ни усал – хытă каять /туп.юм./. Музыка сăпрайĕн пайĕ. Йывăç. 4. Чăваш писателĕ. В.Краснов-Асли çырнă «Вутра» романти сăнар. Тĕнчипе паллă Пăлхар ăсчахĕ – хĕрарăм. Кăшлакан чĕрчун. 5. Асăну палли. Килти кухня хатĕрĕ. Вĕçен кайăк. Шыв ăсмалли хатĕр. 6. Çăм паракан чĕрчун. Çăткăн вĕçен кайăк. Вăхăт саманчĕ. Йывăç кĕреçе. 7. Шыв юхтармалли хатĕр. Хисеп шучĕ. Пĕччен çын. Чăваш хĕрарăмĕн пуça тăхăнмалли хатĕрĕ. 8. Пахча çимĕç. Ӳсен-тăран. Вĕçен-кайăк. П.Осипов çырнă паллă хайлав. 9. Хĕллехи тум. Хутлă-хутлă хутаçлă, хура сăран атăллă. Чăваш апатĕнче усă куракан çу. Ялта усă куракан хатĕр. 10. Тырă тĕшшине пухăнакан пĕрчĕсем. Усăллă, сарлака çулçăллă курăк. ... пуссан, хӳме юлать; пушар пулсан, ним те юлмасть /ват.сăм./. Хăш-пĕр çĕршывра качча каякан хĕршĕн тӳлекен укçа. 11. Ӳнер тĕсĕ. Вăрмар районĕнчи ял. Пысăк халăх йышĕ, наци. Чăваш халăх çимĕçĕ. 12. Чăвашран тухнă паллă летчик, Совет Союзĕн Геройĕ. Паллă бал ташши. Кавир тĕсĕ. 13. Муркаш районĕнчи ял. Шыври чĕрчун. С.Аслан романĕ. Элĕк районĕнчи ял. 14. Ут таврашĕ. Ялсенчи хальхи администраципе территори виçи. Алăк пайĕ. Апат-çимĕçре усă куракан техника культурин çимĕçĕ. 15. Ĕлĕк усă курнă вăрăмăш виçи. Строительствăра е ытти техникăра усă куракан хатĕр. Кавир тĕсĕ. Ăслăлăх меслечĕ. 16. Пуплев пайĕ. Шăвакан чĕрчун. Чăваш поэчĕ, «Атнер» поэма авторĕ. Мăйăр паракан тĕм, йывăç.

*Юрий ФРОЛОВ* **(Шупашкар)** *хатĕрленĕ.*

## «Икĕ картлашка» пуçватмăш

**Сирĕн умра икĕ картлашка. Вĕсенче аялалла сăмахсем вырнаçнă. Тĕрĕс тĕшмĕртсен, паллă тунă аялти йĕркесенче чăвашсен ваттисен сăмахĕ вуланĕ.**







**«А» пуçватмăш.** 1. Чăваш халăх уявĕ. 2. Эвенкири юханшыв. 3. Литературăра усă куракан пĕчĕк хайлав. 4. Тĕнчери кашни çын пуçне пĕр миллион тивекен хурт-кăпшанкă. 5. Тĕнче енĕ. 6. Хĕллене, сивве кăмăллакан вĕçен кайăк. 7. ... мулкача хăвалакан пĕрне те тытайман /ват.сăм./. 8. Ĕлĕк килте хатĕрленĕ пусма-тавар. 9. Çутçанталăкри пулăм. 10. Нота. 11, 12. Раççей çарĕнчи вертолет.

**«Ă» пуçватмăш.** 1. Вăрман каснă çĕрте ... ӳкмесĕр пулмасть /ват.сăм./. 2. Шыв çумĕнчи вĕçен кайăк. 3. Чăваш хĕрарăм сăвăçи. 4. Çăматă, çĕлĕке тата ыттине те хатĕрлекен ăстаçăсен ĕç хатĕрĕ. 5. Пĕлĕтри çӳллĕш. 6. Чăвашсен ĕлĕкхи йăла-йĕрки. 7. Çутçанталăкри çуркуннехи пулăм. 8. К.Ивановăн «Нарспи» поэмине çармăс чĕлхине куçараканĕ. 9. Акăлчансен паллă философĕ. 10. Вырăссен паллă ӳнерçисенчен пĕри. 11, 12. Чăвашсен алфавитĕнчи çирĕммĕш, çирĕм иккĕмĕш саспаллисем.

## «Пĕр сăмах урлă»
### пуçватмăш




**Чылай чăваш юмахĕнче тĕп сăнар – Пукане. Ăна тĕпе хурса, çак сăмаха çырса хунă та ĕнтĕ. Ыттисене ун çумне çыпăçтарăр.**

Ату–Кар–Нит–Оле–Пан–Тар–Тун–Уда–Аван–Амок–Акка–Алта–Арад–Арам–Анас–Аппа–Атар–Атас–Ăсан–Загс–Йĕна–Квак–Лупа–Пăта–Прус–Рена–Рекс–Рига–Уран–Тито–Тога–Трат–Асино–Атака–Вутра–Красс–Курав–Кусар–Наина–Прага–Редис–Ситро–Сулак–Оникс–Акатуй–Акпарс–Атлант–Дранка–Игуана–Лукари–Пукане–Ситова–Аверина–Агакова–Адамова–Аризона–Атакама–Одорант.